# Ҫĕнтерӳ ҫулĕ

1930 ҫулхи ноябрĕн 1-мĕшĕнчен тухать

электронлă адрес: print@vurnar.cap.ru

Вăрнар район хаҫачĕ

2011 ҫул
ҫу/май/ уйăхĕн
21-мĕшĕ
шăмат кун
57-58/10375/ №
Хакĕ ирĕклĕ


## Кашни ветерана – хăтлă хваттер-ҫурт

Раҫҫей Президенчĕ «1941–1945 ҫулсенчи Тăван ҫĕршывăн Аслă вăрҫин ветеранĕсене пурăнмалли ҫурт-йĕрпе тивĕҫтересси ҫинчен» Указа алă пуснăранпа виҫĕ ҫул иртрĕ. Пĕлтĕр ҫак Указа улшăнусем кĕртнĕ – Дмитрий Медведев пурнăҫ условийĕсене лайăхлатма 2005 ҫулхи мартăн 1-мĕшĕ хыҫҫăн черете тăнисен списокне кĕске вăхăтра туса хатĕрлеме палăртнăччĕ

**ПИРĔН ИНТЕРВЬЮ**

**2010-мĕшĕ – Аслă Ҫĕнтерĕвĕн юбилейлă ҫулĕ – вăрҫă ветеранĕсемшĕн ҫĕнĕ, хăтлă пурнăҫа илĕртекен ҫул пулчĕ. Федераллă саккунпа килĕшӳллĕн районта пурăнакан 64 вăрҫă участникĕ, вăрҫăра вилнисен тата тăлăх салтак арăмĕсем 92-ĕн ҫĕнĕ хваттер-ҫурт туяннă. «Ветерансене социаллă хӳтĕлевпе тивĕҫтересси патшалăх политикин тĕп ҫул-йĕрĕсенчен пĕри. Ăна пурнăҫлассине нимĕнле укҫа-тенкĕ йывăрлăхĕ те витĕм кӳмелле мар», – палăртнăччĕ ҫĕршыв ертӳҫи. Владимир Путин премьер регионсен ертӳҫисене ҫак ыйтăва хăйсене куҫран вĕҫертмесĕр асăрхаса тăма хушнă, кашни ветеранпа тимлĕн ĕҫлемеллине палăртнă. Пирĕн районта ку енĕпе ĕҫ пуҫ еплерех? Ҫакăн пирки паян эпир федераллă саккуна пурнăҫлама туса хунă районти комиссин председателĕпе Николай Порфирьевич ПЕТРОВПА калаҫатпăр.**



*– Пурăнмалли ҫурт-йĕре тивĕҫес ирĕкпе хальлĕхе миҫе ветеран усă курнă тата асăннă федераллă саккун кăҫал та ĕҫлет-и?*

– Пирĕн районта паянхи куна Тăван ҫĕршывăн Аслă вăрҫин 40 инваличĕ, 102 участникĕ пурăнать. Ҫапăҫу хирĕнче вилнĕ паттăрсен арăмĕсем 9-ăн, тăлăх салтак арăмĕсем – 359. Раҫҫей Президенчĕн Указне пурнăҫласа иртнĕ ҫул хăйсен пурнăҫ условийĕсене лайăхлатма ҫак категорири 156 ҫынна, вăл шутран 64 вăрҫă участникне тата 92 тăлăх салтак арăмне, сертификатсемпе тивĕҫтернĕ.

Чăваш Республикин сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерстви 2011 ҫулта пурнăҫ условийĕсене лайăхлатма района ҫитернĕ списокра 94 ветеран. 16-шне, вăл шутран тăвată вăрҫă участникне тата 12 тăлăх салтак арăмне, ҫурт тума е хваттер туянма май пуррине ĕнентерекен свидетельствăсем панă ĕнтĕ.

Ку енĕпе тимлесех ĕҫлетпĕр, пур ветеран та хăтлă кил-ҫуртра е хваттерте пурăнтăр тесе тăрăшатпăр.

*– Ҫынсем нумай чухне саккуна тĕплĕн пĕлменнипе тĕрлĕ калаҫу пуҫараҫҫĕ. Асăннă саккун тĕлĕшпе те. Аса илтерĕр-ха, тархасшăн, Раҫҫей Президенчĕн Указĕпе Тăван ҫĕршывăн Аслă вăрҫин пур ветеранĕн те пурнăҫ условийĕсене лайăхлатма ирĕк пур-и?*

– Чăн та, хăйĕн 2008 ҫулхи май уйăхĕн 7-мĕшĕнчи 714-мĕш №-лĕ «1941–1945 ҫулсенчи Тăван ҫĕршывăн Аслă вăрҫин ветеранĕсене пурăнмалли ҫурт-йĕрпе тивĕҫтересси ҫинчен» Указĕпе Раҫҫей Президенчĕ ĕҫ тăвакан влаҫ органĕсем умне ветерансене хăтлă «кĕтеспе» кĕске вăхăтра тивĕҫтерес задачăна лартрĕ. Анчах та ҫак Указ тăвată категорири гражданселне кăна пырса тивет: вăрҫă инваличĕсене тата участникĕсене, ҫапăҫу хирĕнче пуҫĕсене хунă паттăрсен тата тăлăх салтак арăмĕсене, «Блокадăри Ленинградра пурăннă ҫын» палла тивĕҫнĕ граждансене – енчен те ҫурт-йĕр саккунĕпе килĕшӳллĕн вĕсен пурнăҫ условийĕсем чăнахах та требованисене тивĕҫтермеҫҫĕ пулсан.

Раҫҫей Федерацийĕн Пурăнмалли ҫурт-йĕр кодексĕн 51-мĕш статйипе килĕшӳллĕн ҫак ҫынсене пурăнмалли кĕтеспе тивĕҫтермелле:

енчен те ҫак ҫын пурăнмалли ҫурт-йĕре тытакан е ун харпăрлăхҫи, е ҫурт-йĕре тытаканăн е харпăрлăхҫин ҫемье членĕ пулмасан;

енчен те ҫемьен пĕр членĕ ҫине пурăнмалли лаптăк палăртнă нормăран сахалтарах тивет пулсан. Пирĕн районта вăл кашни ялхула тăрăхĕнче урăхла. Вырăнти депутатсен Пухăвĕсенче ҫирĕплетнĕ тăрăх, Малти Ишек, Пăртас, Ярмушка, Шĕнер Ишек ял тăрăхĕсенче 18 тăваткал метр, Хирпуҫ тата Ершепуҫ тăрăхĕсенче –16, Калинино, Вăрнар хула, Кĕҫĕн Кипек, Мăн Явăш тăрăхĕсенче – 14, Вăрманкасра – 13, Упнер, Мăн Турхан, Кульцав, Санарпуҫ, Уйкас Кипек ял тăрăхĕсенче – 12, Аҫăмҫыр-

2 стр.

**ХУҪАЛĂХСЕНЧИ ПĔР КУН**

## Шăпчăк ыйхиллĕ ĕҫчен, мĕнле пурăнатăн?

**Ҫын ăҫта вăй хунине часчасах пĕрре пăхса пĕлме пулать. Нар пек сăн-пит, тĕреклĕ хул-ҫурăм, ĕҫпе кушăрханă алăсем, тарăн шухăшлă мăшăр куҫ... Ҫакăр ҫитерекенĕн портречĕ пирĕн ума тухса тăрать. Яваплăха туйса ĕҫлет хресчен. Иртен пуҫласа сĕм ҫĕрлеччен хура тар юхтарать.**



◆ А.Игнатьев (сулахайри) тата райадминистрацин ял хуҫалăхĕпе экологи пайĕн пуҫлăхĕ В.Никифоров.



◆ А.Степанов механизатор.

– Ĕҫчен хура пулсан та, ҫăкри шурă, – терĕ Алексей Яковлевич Игнатьев фермер. Унăн хуҫалăхĕнче уяр ҫанталăкăн кашни саманчĕпе усă курса пĕрчĕллĕ культурăсене пĕтĕмпех акса пĕтернĕ. Ĕҫ кăтартăвĕ – 180 гектар. Анчах та фермера пăшăрхантараканни те ҫук мар. «Кĕркунне уй-хир «ылтăнне» тивĕҫлĕ хакпа вырнаҫтарма пулĕ-ши?.. Мĕншĕн пирĕн ҫĕршыври хресченĕн продукци сутма вăхăт ҫитсен ялан пуҫа ыраттармалла? – ыйту хыҫҫăн ыйту ҫуралчĕ Алексей Яковлевичăн. – Германире пулнă май ҫакна ҫирĕплетсе калатăп, ку ҫĕршыври фермерсен кăмăлĕ яланах ҫĕкленӳллĕ. Унта пурне те тăрантаракан пысăк хисепре ҫав. Германире ҫĕр ĕҫченне усă куракан кашни гектар ҫĕр лаптăкĕшĕн 300 евро тӳлеҫҫĕ, продукцие тирпейленĕшĕн – тата 350 евро. Хăватлă техника темиҫе те пулнăран нимĕҫсем тыр-пула пĕр-ик кунтах пухса кĕртеҫҫĕ».

Фермерăн чунĕ ыратни кашни сăмахран палăрать. Хресченĕн савăк кăмăлпа ĕҫлеме хавхалану сахалрах. «Налук хыҫҫăн налук тӳлемелле, тĕрлĕ тĕрĕслев органĕсем ĕҫлеме чăрмантараҫҫĕ, ҫĕр регистрацилессине ытла кăткăслантарса янă. Дизтопливо илес пулсан сахал мар хут хатĕрлемелле...» – хĕрӳллĕн янăрарĕҫ фермерăн сăмахĕсем. Алексей Игнатьев питĕ уҫҫăн калаҫать тенине пĕрре мар илтнĕ. Пуху-канашлусенче те вăл хăйĕн шухăшне витĕмлĕн палăртать. Ĕмĕр тăршшĕпех ҫĕр ĕҫлесе пурăннă ҫыннăн чи ҫутă ĕмĕт-тĕллевĕсенчен пĕри – хресчен пысăк хисепе тивĕҫнине курас килни. Чăн та, пасар экономикин саккунĕ тесе сĕте йӳнетнине ăнланма йывăр. Лавккара вара хакĕ ҫаплипех – кашни литршăн 28–32 тенкĕ кăларса хумалла.

Алексей Яковлевича ял шăпи те хытах канăҫсăрлантарать. Вăй питти ҫынсем ав ҫĕр ĕҫĕпе ĕҫлес вырăнне ĕҫке яраннă е тĕнче тăрăх касса ҫӳреҫҫĕ. Фермер каланă тăрăх, хресчен чунĕллĕ ҫынсем сахаллансах пыраҫҫĕ. Вăл хастар ĕҫлекенсене тупас, вĕсене хуҫалăха явăҫтарас тесе тăрăшать. «Алексей Яковлевич пултаруллă ертӳҫĕ кăна мар, тĕлĕнмелле лайăх ҫын та, – ҫапла палăртрĕ ҫамрăк механизатор Александр Степанов. – Ял ҫынни енне яланах пулăшу аллине тăсма хатĕр».

Ял хуҫалăх организацийĕн ертӳҫи йывăр лава ҫаплипех малалла туртать. Аҫу-аннӳн ани-ҫаранне ан ман тенине пĕчĕкрен ăша хывни унăн чун-чĕринче ҫирĕп тымар янă. Алексей Игнатьев пуҫаруллă утăмсем туса пушă выртакан ҫĕрсене ҫулленех пусă ҫаврăнăшне кĕртсе пырать. Ял хуҫалăх культурисен лаптăкне ӳстерессине пысăк тимлĕх уйăрать. Ҫĕр улми те ытларах лартса хăварасшăн. «Иккĕмĕш ҫăкăра» суйланă ҫĕрте ĕҫ ҫыннисем тăрăшсах тимлеҫҫĕ, ертӳҫĕ те ҫанă тавăрса вăй хурать. Ҫу уйăхĕн 20-мĕшĕ тĕлне Алексей Игнатьев фермер хуҫалăхĕнче ҫĕр улми 100 гектар лартнă.

## Хуҫалăхра пултăр туслăх – тухăҫ пулĕ тулăх

Куҫ хăрать те, ал тăвать теҫҫĕ. Карл Маркс ячĕллĕ кооперативра тĕш тырăсемпе пăрҫа йышши культурăсене 500 гектар ытла акса хăварнă, ҫĕр улми 40 гектар лартнă. Валерий Филиппович Шумилов ертӳҫĕ каланă тăрăх, Андрей Осипов, Александр Григорьев, Иван Григорьев, Эдуард Абрамов, Сергей Кириллов, Николай Николаев механизаторсем тата ыттисем туслă, пĕр тĕллевпе вăй хунăран ĕҫ кăтартăвĕсем лайăх.

Карл Маркс ячĕллĕ кооператив выльăх-чĕрлĕх йышĕпе Вăрнарти аш-какай комбиначĕ хыҫҫăн иккĕмĕш вырăн йышăнать. Кăҫал хуҫалăхра ешĕл масса хатĕрлеме кукуруза 150 гектар акĕҫ. Ĕне выльăх кĕрхи ыраш уйĕнче ҫӳрет. Кооперативра кашни ĕнерен вăтамран 20 килограмм сĕт суса илеҫҫĕ. Ку кăтарту районта чи пысăкки.

Тема тăсăмĕ 2 стр.

### Саламлатпăр!

Чăваш Республикин Президенчĕн 2011 ҫулхи ҫу уйăхĕн 16-мĕшĕнче кăларнă 37-мĕш Указĕпе килĕшӳллĕн культурăри тава тивĕҫлĕ ĕҫсемшĕн тата нумай ҫул ăнăҫлă вăй хунăшăн **Вăрнар районĕнчи Ярмушка ялĕнчи культура ҫурчĕн директорне Надежда Алексеевна ЛАВРЕНТЬЕВĂНА «Чăваш Республикин культурăн тава тивĕҫлĕ ĕҫченĕ»**, экономикăпа финанс ĕҫ-хĕлĕнчи тава тивĕҫлĕ ĕҫсемшĕн **Раҫҫей Федерацийĕн Пенси фончĕн Чăваш Республикинчи Вăрнар районĕнчи управленийĕн (патшалăх учрежденийĕн) пуҫлăхне Людмила Леонидовна РЕДЬКОВĂНА «Чăваш Республикин тава тивĕҫлĕ экономисчĕ»** хисеплĕ ятсем панă.

### «Ҫĕнтерӳ ҫулĕ» хаҫата 2011 ҫулăн иккĕмĕш ҫур ҫулĕ валли ҫырăнтармалли тапхăр пырать

2011 ҫулхи июль–декабрь уйăхĕсенче «Ҫĕнтерӳ ҫулне» почта урлă илсе тăма унчченхи пекех – 187 тенкĕ те 80 пуспа – ҫырăнтараҫҫĕ. Хаҫата редакцие килсе илмелле те ҫырăнма пулать, хакĕ – 110 тенкĕ. «Ҫĕнтерӳ ҫулне» ҫырăннисем Вăрнар чиркĕвĕн прихучĕ кăларса тăракан «Георгиевский листок» хаҫата малашне те тӳлевсĕр илсе тăрĕҫ.

**«Ҫĕнтерӳ ҫулĕ» хаҫатсăр ан юлăр. Юратнă хаҫата ҫырăнăр, вулăр!**

### ҪАНТАЛĂК

| | Вырсарни кун | Тунти кун |
|---|---|---|
| | 22.5 | 23.5 |
| кăнтăрла | +19 | +18 |
| ҫĕрле | +10 | +10 |

| | Ытлари кун | Юн кун |
|---|---|---|
| | 24.5 | 25.5 |
| кăнтăрла | +20 | +21 |
| ҫĕрле | +9 | +10 |

*«Метеоновости» информаци агентствин информацийĕ тăрăх.*

# Кашни ветерана – хăтлă хваттер-çурт

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

ми, Çĕрпел тата Калинино тăрăхĕсенче – 11, Çавалкас тăрăхĕнче 10 тăваткал метр;

енчен те çурт-йĕр пурăнмалли çурт-йĕр требованийĕсене тивĕçтермест пулсан;

енчен те вăл темиçе çемьепе пĕрле пурăнать, енчен те çемьере вăрах йывăр чирпе аптăракан пур, унпа пĕрле пурăнма май çук пулсан.

Çÿлерех асăннă категорири ветерансен те çак пунктсене лексен кăна пурнăç условийĕсене лайăхлатма ирĕк пур. Ытти нихăш категорири гражданăн та, вăл шутра тыл ĕçченĕсен те, фашист концлагерĕсен тата гетто тыткăнçисем пулнисен те, «Ветерансем çинчен» федераллă саккунпа тата РФ Президенчĕн 714-мĕш №-лĕ Указĕпе килĕшÿллĕн хваттер е çурт-йĕр ыйтма ирĕк çук.

*– Раççей Президенчĕн Указĕпе тата «Ветерансем çинчен» федераллă саккуна кĕртнĕ улшăнусемпе килĕшÿллĕн ветерансене пурăнмалли çурт-йĕрпе тивĕçтерес функцине вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем пурнăçлаççĕ. Тĕрĕссипе, питĕ кăлтăклă ĕç, кашни нюанса шута хумалла. Николай Порфирьевич, чăн ÿкерчĕк мĕнлерех çырăнса пырать-ши?*

– Комисси кашни заявление тĕплĕн тĕрĕслет. Вĕсене ячĕшĕн кăна пăхни, ăнланатăр, саккуна хирĕçле тунă ĕçпе танах. Пирĕн алă айĕнче – харăсах темиçе саккун, Президент Указĕ вĕсем çине те тĕрев тăвать-çке. Калăпăр, акă, пур норма – пĕр çынна çавăн чухлĕ-çавăн чухлĕ тăваткал метр тивĕçмелле. Енчен те ветеран çак нормăна «шайлашать» пулсан, пĕр пăхсан, унăн пурнăç условийĕсене лайăхлатма ирĕк çук пек. Тĕрĕссипе вара кашни тĕслĕхе тĕплĕн пăхса тухмалла: лаптăкĕ мĕн чухлĕ, вăл мĕнле пахалăхрашайра, миçе çын пурăнать тата ыт.те. Калăпăр тата норма çителĕклĕ, çурчĕ те аванах курăнать пек. Ку чухне пурăнмалли çуртсен кивĕлĕхне тата юрăхсăрлăхне хаклакан Положение тишкеретпĕр, ун тăрăх енчен те кирпĕч çурт 70 процент, йывăç çурт 65 процент таран кивелнĕ пулсан, ветеран пурнăç условийĕсене лайăхлатма тивĕççине палăртатпăр.

*– Ветерансем свидетельствăсемпе хваттерсем туянчĕç е вĕсене çурт хăпартса пачĕç. Анчах та нумайăшĕ çĕнĕ кĕтесре пурăнмасть, вĕсенче ачи-мăнукĕсем тĕпленеççĕ е хваттере яраççĕ. Çакă патшалăх укçине усăсăр тăккалани мар-и?*

– Чăн та, енчен те ветерансен черете тăричченхи çуртне юрăхсăр тесе йышăннă пулсан, тĕрĕссипе, унта никамăн та пурăнмалла мар, ăна дача вырăнне кăна усă курма юрать. Чăннипе кивĕ, çĕрĕшнĕ, пурăнма юрăхсăр çуртсене пăсмалла, ку тĕслĕхре вара вĕсем харпăрлăхра пулнă пирки пирĕн çапла тума ирĕк çук.

*– Маларах Указа кĕске вăхăтра, иртнĕ çулах, туллин пурнăçламалла тесе палăртнăччĕ. Халĕ унăн вăхăт рамки çук ĕнтĕ. Çавăнпа та черете тăма ĕлкĕреймен ветерансене документсене тăратмалли йĕркене тепĕр хут аса илтерсен пăсмасть пулĕ?*

– Пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма тивĕççине çирĕплетес тесен Указпа килĕшÿллĕн асăннă категорие кĕрекен граждансен черете тăма хăйсем пурăнакан вырăнти хăй тытăмлăх органне çитмелле. Унта вĕсене мĕнле документсем тăратмаллине ăнлантарĕç.

Ял-хула поселенийĕсем хатĕрленĕ списока районта туса хунă комисси тĕплĕн тишкерет, кашни ветеран патне килне çитсе пурăнмалли условисене тĕрĕслет. Хыççăн пĕтĕмĕшле списока Чăваш Республикин сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану тата хула тăвас ĕç тата общество инфратытăмĕн министерствисем пăхса тухаççĕ.

*– Калаçушăн тавтапуç!*

**С.ЧИКМЯКОВА калаçнă.**

# Чăваш ен – çĕр улми çĕршывĕ



◆ И.Петров тата М.Владимиров

Пирĕн республика, çав шутра район та «иккĕмĕш çăкăр» çитĕнтерессипе тĕллевлĕ ĕçлет. Шел пулин те шăрăх çанталăка пула пĕлтĕр çĕр улми ăнса çитĕнмерĕ. Кăçал аграрисен пысăк тухăç илме шанăç пур.

«Мураты» кооператива пырса кĕрсен кăпăшка хура çĕр симĕс кавирпе витĕннине куратăн, кĕрхи тырăсенчен çуртрисем те юлмаççĕ, çÿлеллех туртăнаççĕ. Кăçал çăкаллă-явăшсем тыр-пула яланхи пекех кĕске вăхăтра акса пĕтернĕ, ята яман. Халĕ тăри юррипе хавхаланса ĕç çыннисем çĕр улми лартаççĕ. Вячеслав Волков «Джон Дир» тракторăн рульне çирĕп тытса «иккĕмĕш çăкăра» лартма çĕр хатĕрлет. Вăрлăха уй-хире Илья Петров вăхăтра турттарса тăрать. Михаил Владимиров çĕр улмине тухăçлă лартма тăрăшать. Хурçă учĕ те хăватли. «Мураты» кооперативăн ертÿçин заместителĕ Юрий Спиридонов ĕç кал-кал пынипе кăмăллă. «Чăваш ене çĕр улми çĕршывĕ теççĕ. Çапла малалла та каламалла пултăрччĕ. «Иккĕмĕш çăкăр» ăнса çитĕнтĕр тесе пĕтĕм вăй хурăпăр», – терĕ вăл. Кооперативра «иккĕмĕш çăкăра» 250 гектар çитĕнтересшĕн, ку кăтарту иртнĕ çулхинчен 50 гектар ытларах.

Ĕçченсене тутлă апат çитерес тесе Эльвира Петрова, Алина Рябинская поварсем яваплăхпа тимлеççĕ.

**Е.ТИКИНЕВА.**

# Çĕнтерÿ çăлтăрне паттăрсене халаллană

## АСЛĂ ÇĔНТЕРÿ: 66 ÇУЛ

Фашистла Германие çĕнтернĕренпе 66 çул иртрĕ. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи историре юлчĕ пулсан та, ветерансемшĕн хаяр çапăçусем асрах-ха. Вĕсен аса илĕвĕсем ачисене, мăнукĕсене куçса пырса çĕнтерÿçĕ-салтаксен паттăрлăхне манма памаççĕ. Çамрăк ăру асаттесемпе асаннесем мĕн чăтса ирттернине хаклама пĕлни питĕ пĕлтерĕшлĕ.

Хирпуçĕнчи шкулта вĕренекенсемпе учительсем акă «Салют, Çĕнтерÿ!» республика акцийĕ йĕркипе иртнĕ «Çĕнтерÿ çăлтăрĕ» флэшмоба хутшăннă. Кашниех хĕрлĕ çăлтăр ăсталанă, унта вăрçа хутшăннă тăванĕсен ячĕ-хушамачĕсене çырнă. Ку çăлтăрсене ятарлă вырăна çаклатса хунă – çапла майпа пĕчĕк çăлтăрсем пысăк Çĕнтерÿ çăлтăрне пĕрлешнĕ.

Сăн ÿкерчĕксене вара ачасем Шупашкарти «Эткер» центра ярса панă. Вĕсене центрăн сайчĕ çинче те тупма пулать. Пĕтĕмпе флэшмоба 55-ĕн хутшăннă, пĕчĕк çăлтăрсен шучĕ – 57. Чи хастаррисем 8-мĕш класра вĕренекенсем пулнă. Хăйсен Çĕнтерÿ çăлтăрне ачасем юнлă çапăçу хирĕсенче пуçĕсене хунă тăванĕсене тата ытти салтаксене халаллană.

## КОСМОНАВТИКА ÇУЛТАЛĂКĔ

Унччен маларах, Космонавтика çулĕн йĕркипе, Хирпуçĕнчи шкулта тепĕр интереслĕ мероприяти иртнĕ – 2,3-мĕш классенче вĕренекенсене «Непоседы» пĕрлĕхе тата 6-мĕш класра пĕлÿ пухакансене «Хĕвел ачисем» космонавтсен отрядне илнĕ. О.Николаева аслă вожатăй ертсе пынипе ачасем сувенирсем, пултарулăх номерĕсем, илемлĕ тумтир хатĕрленĕ.

«Непоседы» пĕрлĕхе кĕрекенсен тĕрлĕ тĕрĕслевсем витĕр тухма тивнĕ: саккунсене аса илнĕ, тупа туса «Шкул çĕршывĕ» гимна мăнаçлăн юрланă. Çамрăк космонавтсем, 6-мĕш класра вĕренекенсем, кăтартнă ташă та уява илем кÿнĕ. З.Андреевапа Е.Николаева «Космоса çул уçакансем» проектпа, Д.Васильев «Чăваш енĕн тĕнче уçлăхне тухнă каччисем» наукăпа тĕпчев ĕçĕпе паллаштарнă.

Шкул директорĕн заместителĕ В.Феофанова ачасене яланах хастар пулма, лайăх вĕренме, юлса пыракансене пулăшма, ырă ĕçсем тума суннă.

**И.ЯКОВЛЕВА.**

# Шанчăклăх стратегийĕ

**Раççей çыннисен патшалăхăн шутланман пенси фончĕсем (НПФ) тĕлĕшпе интерес çултан-çул ÿссе пырать. Халĕ çĕршывăн пенси рынокĕнче 100 ытла НПФ ĕçлет. Хăвăн фондна мĕнле суйласа илмелле? Специалистсем çапла канаш параççĕ: чи малтанах фондăн ĕç стажĕ, унăн тупăшлăхĕ, клиентсен йышĕ çине тимлĕх уйăрмалла. Питех те кирлĕ кăтарту – фонд пурлăхĕ мĕн чухлĕ нумайрах, клиент умĕнчи тивĕççсене пурнăçлассин гарантийĕсем те çавăн чухлĕ пысăкрах.**



Реклама

Халĕ вара темиçе цифра. «Промагрофонд» НПФ Канашĕн март вĕçĕнче иртнĕ ларăвĕнче 2010 çулхи ĕç кăтартăвĕсене пĕтĕмлетнĕ. Итогĕсем самаях сумлă. НПФăн пурлăхĕ 2,8 хут ÿснĕ тата паянхи куна 11 миллиард ытла тенкĕпе танлашать. Устав ĕç-хĕлне тивĕçтермелли пурлăх 55 процент ÿснĕ тата 2,5 миллиард ытларах тенкĕпе танлашнă. Пухăнса пыракан пенси укçин калăпăшĕ 2,4 хут ÿснĕ, 8,7 миллиард тенке çитнĕ. Фонд шанчăклăхĕ сумлă результат парать: 2010 çул итогĕсемпе «Промагрофонд» НПФ Совечĕ клиентсен счечĕсем çине çулталăкне 10 процентпа инвестици тупăшĕ куçарса пама йышăннă. Тĕслĕхрен, енчен те сирĕн лицевой счет çине 10 000 тенкĕ хывнă пулсан, куçарса панă тупăша шута илсе вăл 1000 тенкĕ хушăннă. Паян мĕнле банк çакăн пек процентсем сĕнме пултарать-ха?

Ĕçĕн тата тепĕр питĕ пĕлтерĕшлĕ кăтартăвĕ – клиент бази сарăлса пыни. «Страхланă çынсен хисепĕпе 2010 çулта Фонд Раççейри НПФсен пĕрремĕш пилĕк йышне кĕнĕ, – палăртать «Промагрофонд» НПФăн ĕçе пурнăçлакан директорĕ Ольга Буланцева. – 2010 çулта пирĕн фонда 315 000 çын суйласа илнĕ. Çакă халăхăн пенси тĕлĕшĕнчи пĕлĕвне ÿстерессипе, шанчăклăхпа тупăшлăха пĕрлештерессипе çыхăннă пирĕн стратеги хăйне тÿрре кăларнине çирĕплетет».

«Промагрофонд» НПФ хăйĕн уйрăмĕсен сетьне тăтăшах анлăлатса пырать. Фонд Раççейри 113 хулара ĕçлет, 2011 çулта çĕнĕ офиссем уçăлĕç, мĕншĕн тесен ку пирĕн клиентсемшĕн меллĕ. Кунсăр пуçне «Промагрофонд» НПФра çакăн пек йăла-йĕрке пулса кайнă: страхланă çынсен пухăнса пыракан пенси укçин пĕр пайне фонд хăй ĕçлекен регионсен экономикине инвестицилени. Инвестицисене регионсен влаçĕсемпе калаçса татăлнă тăрăх хывнă укçа чăннипех тупăш кÿтĕр тесе хываççĕ.

Чăваш енре «Промагрофонд» НПФа 2008 çулта уçнă. Иртнĕ çул республикăра унăн çĕнĕ клиенчĕсем 7 пин çын пулса тăнă, ПФОра вара (Фондăн Вăтам Атăл тăрăхĕнчи дирекцийĕ те пирĕн филиал шутланать) – 48 пин. «Ку пирĕн сотрудниксен професси шайĕ ÿснин кăтартăвĕ те, çынсем хăйсен пуласлăхĕ пирки пĕлсе тăрăшма тытăнни те, – тет филиал директорĕ Ирина Косякова. – Пулас пенсие ÿстерес майсем тĕлĕшпе тăтăшах интерес ÿсет: ку вăл хушма пенсисемпе тивĕçтерес программăсем патне те, чи малтанах, пенсисен софинансированийĕн патшалăх программи тĕлĕшпе».

– Пĕрремĕш взнос тÿленĕ самантран тытăнса (программăна вара 2013 çулхи сентябрĕн 30-мĕшĕнчен кая юлмасăр кĕмелле) çын софинансировани программине 10 çул хушши хутшăнать, – тăсать малалла Ирина Николаевна. – Ку вăл нумай вăхăтлăх тата тупăшлă проект. Калаçу, чăннипе илсен, çулталăкри 100 процентлă тупăшлăх пирки пырать, ăна урăх нимĕнле финанс инструменчĕ те памасть. Инвестициленине шута илсен вара тупăшлăх пысăкрах та.

Калăпăр, 2009 çулта сирĕн взнос софинансированипе 2 пин тенкĕпе танлашнă. Патшалăх та çавăн чухлех хушса панă – çапла вара сирĕн пенси счечĕ çинче 4 пин тенкĕ пухăннă. Енчен те эсир пухăнса пыракан пенси укçине «Промагрофонд» НПФа куçарса панă пулсан, çулталăк хушшинче çак сумма тата тепĕр 10 процент – 400 тенкĕ ÿснĕ.

Юлашкинчен тата укçан пĕр пайĕ сирĕн пата пуласлăхра мар, паянах таврăнать. Пенси софинансированийĕн программипе тÿленĕ взноссен сумминчен эсир социаллă налук вычетне 13 процент илетĕр. Урăхла каласан, тÿленĕ 2 пин тенкĕрен сирĕн пата 260 тенкĕ каялла таврăнать. Кун йышши налук çăмăллăхĕсем патшалăхăн шутланман пенси тивĕçтерĕвĕн договорĕпе хушма пенси программисем тăрăх тÿлекен взноссем тĕлĕшпе те ĕçлеççĕ.

Софинансировани программине кĕмешкĕн заявление çырма Раççей Пенси фончĕн хăвăр пурăнакан вырăнти управленине те, «Промагрофонд» НПФа та юрать, вăл 2011 çулхи февралĕн 28-мĕшĕнче Раççей Пенси фончĕн Чăваш Республикинчи – Чăваш Енри уйрăмĕпе алă пуснисене çирĕплетсе парасси çинчен пĕрпĕринпе килĕшÿ тунă.

**«Промагрофонд» НПФ филиалĕнче (вăл çак адреспа вырнаçнă: Шупашкар хули, Ярославский урамĕ, 29-мĕш çурт, 109-мĕш офис) халăха валли тăтăшах тÿлевсĕр консультацисем ирттереççĕ.**

«Промагрофонд» специалисчĕсем Вăрнар районĕнчи предприятисемпе организацисем чĕннипе те, хăйсем тĕллĕн те халăх патне тухса çÿреççĕ.

**Çыхăнмалли телефонсем – (8352) 62-20-30, 62-17-54.**

*2010 çулта «Эксперт РА» рейтинг агентстви «Промагрофонд» НПФа питĕ пысăк шанчăклăх шайĕ панă – «А+». Рейтинг хакĕн шайĕ çине витĕм кÿрекен ырă факторсен йышне агентство аналитикĕсем пухăнса пыракан пенси укçине инвестицилессин пайĕнчи шайлашуллă консервативлă инвестици стратегине, страховани резервĕн тата пенси тивĕçĕсене хуплаштарса пырассин резервĕн пысăк шайлашулăхне кĕртнĕ.*

ПИРĔН СПРАВКА

*«Промагрофонд» НПФ Раççей пенси тытăмĕнче 16 çул ытла ăнăçлă ĕçлет. Фонд обязательнăй пенси страхованийĕпе тата патшалăхăн шутланман пенси тивĕçтерĕвне туллин парать. «Промагрофонд» НПФ – НПФсен Наци Ассоциацийĕн членĕ, «Раççейри машинăсем тăвакансен союзĕн» членĕ, космос ĕçĕ-хĕлĕн тата Раççейри ДОСААФ участникĕсен пĕтĕм тĕнчери Ассоциацийĕн пенси программисен партнерĕ.*

